3965 44-136

Куçма Чулкаç



# Ĕмĕтсĕр кушак аçи

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1944

# ЁМЁТСЁР КУШАК АҪИ

Ҫут тӗнчере ӗмӗтсӗр кушак аҫи пурӑннӑ. Вӑл питех те юлхав пулнӑ: нихҫан та шӑшисем тытма кайман, яланах ӑшӑ кӑмака ҫинче мӑрлатса сывӑрнӑ. Хырӑмӗ выҫса ҫитсен вӑл мӗн те пулин вӑрлама тухса кайнӑ, вара куҫӗ умне тӗл пулнӑ япалана ӗмӗтсӗрленсех ҫинӗ те, каллех кӑмака ҫине хӑпарса выртнӑ.

Пӗрре ҫапла ӗмӗтсӗр кушак аҫи кӑмака ҫинче лӑпах виҫӗ кун та виҫӗ ҫӗр сывӑрчӗ, унӑн хырӑмӗ выҫсах ҫитрӗ. Вӑл аран-аран тӑчӗ те хӑйӗн хырӑмне хыпашласа пӑхрӗ. Тӗлӗнсех кайрӗ ӗмӗтсӗр кушак аҫи: унӑн хырӑмӗ пуш-пушах мӗн!

нать, анчах куян мучи темшӗн пуллисене вӑлтаран вӗҫертсе илсе каялла шыва ярать. Ҫакна курнипе ӗмӗтсӗр кушак аҫин куҫӗсем чарӑлсах кайрӗҫ, типсе ҫитнӗ ҫӑварӗнчен сурчӑк юхса анчӗ, хырӑмӗнче темскер чӑр-чар туса илчӗ. Юлашкинчен, вӑл тӳссе лараймарӗ, тӳрех ҫапла ыйтрӗ:

— Мӗн тӑватӑн эсӗ, куян мучи?

— Хӑвах куратӑн, пулӑ тытатӑп,—ответ пачӗ ӑна куян мучи.

— Эх, тӑванӑм, ыр кӑмӑллӑ пулса пӗр пуллине те пулин парсамччӗ мана! Эпӗ виҫӗ кун выҫӑ пурӑнатӑп,—терӗ ӗмӗтсӗр кушак аҫи.

— Ҫиес килет пулсан, анса лар та—тыт,—терӗ куян мучи.

Ӗмӗтсӗр кушак аҫи савӑнсах кайрӗ, самантрах шыв хӗррине йӑпӑртатса чупса анчӗ. Куян мучи



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары

ăна вăлтине пачĕ, хăй çырма хĕррине хăпарса ларчĕ. Унччен те пулмарĕ, ĕмĕтсĕр кушак аçин вăлтине пĕр пĕчĕк пулă пырса та хыпрĕ. Хыпрĕ те кăрт-кăрт! туртрĕ.

— Часрах кăлар, сан вăлтуна пулă çакланнă,— терĕ ăна куян мучи.

— Эпĕ сан пек ухмах мар-ха! Эпĕ виçĕ кун çимен, ку пулă мана ирхи апат тума та çитмест,—терĕ ĕмĕтсĕр кушак аçи.

Куян мучи нимĕн те чĕнмерĕ, ун еннелле малти тяппипе çеç сулчĕ. Анчах çак самантра вăлтана çакланнă пĕчĕк пулла пысăкрах пулă пырса хыпрĕ. Хыпрĕ те—картах туртрĕ.

— Кăлар тетĕп!—кăшкăрчĕ куян мучи,—сан вăлтуна пысăк пулă çакланнă вĕт!

— Иккĕмĕш хут калатăп сана, эпĕ сан пек

ухмах мар-ха. Эпĕ виçĕ кун çимен, ку пулă мана кăнтăр апачĕ тума та çитмест,—терĕ ĕмĕтсĕр кушак аçи.

Куян мучи ку хутĕнче те нимĕн те чĕнмерĕ, ун еннелле малти урипе çеç сулчĕ. Юлашкинчен, вăлтана çакланнă икĕ пуллине те çăткăн чăрсăр çăрттан пулă çитсе хыпрĕ те, ĕмĕтсĕр кушак аçине вăлти мĕннипех шывалла туртса кайрĕ. Çырма хĕрринче ларакан куян мучи пĕрре сиксех шыв хĕррине çитсе ларчĕ. Шывалла пăхрĕ те—кăнт! хытса тăчĕ: шывра ĕмĕтсĕр кушак аçи те, пулă тытмалли вăлта та çук...

— Айван, çакнашкал айван тĕнчере те урăх çук пулĕ! Хăйĕн ĕмĕтсĕрлĕхне пула, хăйĕн пуçне те хăех пĕтерчĕ вĕт, тăмпуç,—терĕ те куян мучи Ямаш вăрманнелле вĕçтерчĕ.

Нимĕн тума аптăранă енне ĕмĕтсĕр кушак аçи картишнелле тухрĕ. Çанталăк калама çук аван: хĕртсе хĕвел пăхать, тӳпере пĕр пĕлĕт татки те курăнмасть, çил çуккипе ăвăс çулçисем те хускалмасăр тăраççĕ. Ĕмĕтсĕр кушак аçи савăнсах кайрĕ.

— Çакнашкал çутçанталăкра пурăнма та аванçке, хырăм выççи кăна аптăрататъ,—терĕ те вăл, пахчаналла утрĕ. Утсан-утсан çырма хĕрринех çитсе тăчĕ.

Тĕлĕннипе шанк! хытса тăчĕ ĕмĕтсĕр кушак аçи. Вăл хăйĕн куçне те ĕненесшĕн пулмарĕ, çапах та мĕн курни чăн япалах пулчĕ. Çырмара, шыв хĕрринче, куян мучи вăлтапа пулă тытса ларать мĕн. Те телейĕ çавнашкалах пысăк пулнă унăн, вăлтине пулă хыççăн пулă пырса çакла-

— Капла эпĕ выççах вилме пултаратăп, мĕн те пулин тупса çимеллех пулать,—терĕ те вăл, пĕр урине тепĕр уринчен аран-аран ирттерсе, кăмака çинчен йăраланса анчĕ; анчĕ те тӳрех чăланалла кĕрсе кайрĕ. Анчах кунта унăн куçĕ умне хăйма та, сĕт чӳлмекĕ те тĕл пулмарĕ.

— Тăр ухмахсемех çав ман хуçасем,—терĕ ĕмĕтсĕр кушак аçи.—Вĕсем эпĕ виçĕ кун çимесĕр пурăннине те пĕлмеççĕ, ман валли сĕт те пулин лартса хăварман.

Ĕмĕтсĕр кушак аçи тарăхсах çитрĕ те, пăлтăралла тухса кайрĕ. Пăлтăра тухнă-тухманах унăн умĕнченех пĕр шăши йăпăртатса чупса иртрĕ. Чалт! çеç сикмеллеччĕ ĕмĕтсĕр кушак аçин, çак шăши вара унăн çăварĕнчех пулатчĕ. Анчах вăл, хăй юлхав пулнипе, çак шăшие те тытаймарĕ.

Цена 70 коп.

КУЗЬМА ЧУЛГАСЬ

*Жадный котик*

На чувашском языке

Редактор Л. Агаков.

НТ 00188. Подписано к печати 16-VI-44 г. Заказ 1096 Тираж 15.000 экз.
Типография № 1. Упр. полиграфпром. при СНК ЧАССР г. Чебоксары.